Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

41 (7681) № * Шăмат кун, 2009 çулхи майăн (çу) 23-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Вĕрентӳ

## Вĕренӳри хавхалану саманчĕ



*Çулленех вĕренӳре «5» паллăсемпе ĕлкĕрсе пыракансене, шкулти тата унăн тулашĕнчи ĕçсене, ăмăртусене активлă хутшăнакан вĕренекенсене район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов ятарлă стипенди парса хавхалантарать. Вĕренӳ çулĕн кашни чĕрĕкĕнчех районти 25 ачана çак стипендипе тивĕçтересси ыră йăлана кĕнĕ ĕнтĕ. Майăн 19-мĕшĕнче иртнĕ «Вĕрентӳ кунĕнче» вара кăçалхи вĕренӳ çулĕн виççĕмĕш чĕрĕк пĕтĕмлетĕвĕсемпе палăрнă хастар вĕренекенсем алла стипенди илчĕç.*

*Сăн ӳкерчĕкре: стипендие тивĕçнĕ вăренекенсем район пуçлăхĕпе Ю.А. Ивановпа пĕрле.*

Сывлăх

## Эмелсене врачпа канашласа туянмалла

***Çулталăкĕпех ĕçре иртет нумайăшĕн вăхăчĕ. Тĕрлĕ ыйтусене татса памалла, отпускра та кил-çурт таврашĕнчи пысăк ĕçсене туса ĕлкĕрмелле. Çапла сывлăх пирки те манатпăр. Кайран вара, чир-чĕрсем тупăнсан, эмел çисе сывалас тетпĕр. Анчах эмелсем юлашки вăхăтра хакланчĕç. Мĕн тумалла-ха ку лару-тăрура? Çак ыйту çине Муркашри тĕп больницăн тĕп врачне, ЧР Патшалăх Канашĕн депутатне В.Г. Данилова хуравлама ыйтрăмăр:***

– Пирĕн больница ЧР Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин «Фармаци» патшалăх унитарлă предприятийĕпе килĕшсе эмелсене курттăмăн илессипе ĕçлесе пырать. Муркашри 13-мĕш номерлĕ аптека вара унăн филиалĕ шутланать. Çавăнпа та, «Фармаци» предприяти аукцион мелĕпе ĕçленĕ май, эпир усă куракан эмелсен хакĕсем тăруках ӳсмеççĕ, хăшĕсем вара ытти çĕртинчен йӳнĕрех те. Эмел туса кăлараканпа аптека хушшинче посредниксем нумай пулни вара хака ӳстерет. Çапла ют çĕршывсенче туса кăларнă эмелсен хакĕ те куç умĕнчех.

**– Хаклăрах эмелсем чир-чĕре хăвăртрах ирттерсе яма пулăшаççĕ тесе ытларахăшĕ çакнашкаллисене туянать. Эсир кун пирки мĕн каланă пулăттăр?**

– Пĕр пек усă паракан эмелсем тĕрлĕ ятпа тухаççĕ. Эпир, врачсем, пулăшу ыйтма пыракансене шăпах эмелĕн эффективлăхне тата хакне кура сĕнетпĕр. Муркашри аптекăсене илес пулсан, вĕсен хушшинче, паллах, конкуренци пур. Хакĕсем те тĕрлĕрен ĕнтĕ.

Эмелсене рекламăласси массăллă информаци хатĕрĕсенче чылай, анчах пур чухне те тӳрех шăп çав эмеле туянма васкамалла мар. Сăмахран, Хĕвел анăçĕнче эмеле рекламăласси çук. Пирĕн вара ăслăрах пурăнма вĕренмелле – аптекăна ыткăниччен врачсемпе канашламалла. Шел пулин те, çапла тума ниепле те хăнăхсах çитейместпĕр-ха.

**– Аптекăсенче вара ют çĕршывсенче туса кăларнă эмелсем чылай. Çынсем те вĕсене пахалăхлăрах тесе шутлаççĕ.**

– Пур чухне те «импортнăй» эмел илме тăрăшнин усси сахалрах. Ют çĕршывсенче туса кăларнă эмелсем лайăхрах текен каларăша пăрахăçлама патшалăхăн эмел туса кăларассине вăйлатни кирлĕ. Ку ĕç пуçланнă, анчах хальлĕхе вăйсăррăн. Тĕслĕхрен, Расçейре ку таранччен туса кăларман инсулин тухма тытăннă ĕнтĕ.

Паллах, фармакологи рынокĕнче çӳллĕ шая тухма темиçе çулах кирлĕ пулать. Çапла майпа хамăрăн çĕршывра туса кăларнă хăш-пĕр эмелсем (пахалăхĕпе ют çĕршывсенче кăларнă пеккисемех) аптекăсенче тивĕçлĕ вырăн йышăнасса шанас килет.

**Н. НИКОЛАЕВА** калаçнă.

Пĕрлехи информации кунĕ иртрĕ

## Йывăрлăхсене çĕнтерме вĕренмелле

Юн кун, йăлана кĕнĕ тăрăх, республикăра пĕрлехи информаци кунĕ иртрĕ. Пирĕн района Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председтелĕн çумĕ, промышленноçпа энергетика министрĕ Ю.П. Волошин ертсе пыракан ушкăн килчĕ. Чи малтанах вĕсем район пуçлăхĕпе Ю.А. Ивановпа тĕл пулчĕç. Юрий Александрович вĕсене район ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарчĕ. Унтан виçĕ ушкăна пайланса район администрацийĕн яваплă ĕçченĕсемпе предприятисемпе организацисенче пулчĕç.

Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ, промышленноçпа энергетика министрĕ Ю.П. Волошин, Чăваш Республикинчи суд приставĕсен Федераллă службин управленийĕн ертӳçи – Чăваш Республикинчи тĕп суд приставĕ И.Ю. Корсаков тата район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов чи малтанах «Моргаушагропромснабра» пулчĕç. Предприятире паян пĕтĕмпе 8 çын вăй хурать. Кунта производство бизнес-инкубаторне тăвас ĕçсем пыраççĕ.

Унтан информаци ушкăнĕ «Сеспель» акционерсен хупă обществинче пулчĕ. Унăн генеральнăй директорĕ В.А. Бакшаев предприяти ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарчĕ. Çăмăлах мар пулин те, вăл малаллах талпăнать. Кунта туса кăларакан комбикорм турттармалли цистернăсене туянакансем çук тени йăнăш пулĕччĕ. Великий Новгородран кăна ăна 4 туса пама ыйтнă. Вĕсенчен пĕри çак кунсенче Ростовра иртекен курава кайса килĕ. Кунта хатĕрлекен бензовозсене те туянакансем пур. Хăнасем предприятире алюмини шăратмалли оборудовани ĕçĕпе те паллашрĕç. Каласа хăвармалла, кун пекки тĕнчипе те 3 çеç, вĕсенчен пĕри – «Сеспельте». Паян предприятире 50-шар çын икĕ сменăпа ĕçлет.

Н.Г. Ванеркин ертсе пыракан Муркашри чăх-чĕп фабрикинче те йывăрлăхсене пăхмасăр çирĕп утăмсемпех малалла каяççĕ. Энергие перекетлемелли йĕркепе ĕçлени, çĕнĕ технологие пурнăçа кĕртни ĕнтĕ вĕсене пурнăç сулăнчăкĕсене çĕнтерме май парать. Çулсерен кунта продукци ытларах та ытларах кăлараççĕ, çĕнĕ оборудовани вырнаçтараççĕ:

– Кăçал Испанире туса кăларнă тепĕр оборудовани хута яратпăр, – терĕ Николай Григорьевич.

Кунти коллективпа тĕл пулни вара çакна кăтартса пачĕ: кăмăллă рабочисем хăйсен ĕçĕпе те, ертӳçипе те:

– Ĕç укçине вăхăтра илетпĕр, - терĕç вĕсем.

Николай Григорьевич хăй каланă тăрăх, 2009 çула 14 пин тенкĕ вăтам ĕç укçипе вĕçлесшĕн.

Тĕл пулура залра ларакансем хăйсене хумхантаракан ыйтусене çĕклерĕç. Çав шутран аслă вĕренӳ заведенийĕсенче вĕренме хаксем пысăк, вырăнти электроподстанци хальлĕхе хуçасăр, Калайкасси шкулĕнче кĕнекесемшĕн укçа пуçтарнинче те, ачасене автобуспа турттарассинче те шухăшлаттаракан ыйтусем пур иккен. Район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов та, килнĕ хăнасем те вĕсен ыйтăвĕсене хуравларĕç. Муркаш районĕнче пулнине пĕтĕмлетсе вара Ю.П. Волошин çакна палăртрĕ:

– Чăннипех те, паян вăйлă икĕ предприяти ĕçĕ-хĕлĕпе паллашрăмăр. Тепĕр хут çак сăмахсем тĕрĕссине ăнлантăм: чăннипех те ертӳçĕ пур – предприяти те пур, – терĕ вăл «Сеспельпе» Муркашри чăх-чĕп фабрикине ертсе пыракансем пултарулла пулнине палăртса. – Муркашсен малашне те ăнăçусем пулчăр.

**Л. ТУКТИНА.**

Паян юлашки шăнкăрав янăрать

## Пурнăç çулĕ ăнăçуллă пултăр!

Паян пирĕн районти 11 класс пĕтерекен 317 шкул ачишĕн юлашки шăнкăрав янăрать. Вĕсене пурне те патшалăх аттестацийĕ витĕр тухса, экзаменсене тытса хыçа юлнă вĕренӳ çулĕсенче пухнă ăс-тăнпа пурнăçри ответлă тепĕр тапхăра çĕнĕ шанчăксемпе кĕме сĕнетпĕр. Пĕрремĕш утăмсем çирĕп тата хăюллă пулччăр!

Йыхрав

## Июнĕн 12-мĕшĕнче - Акатуй

Район администрацийĕн пуçлăхĕ çурхи ака-суха ĕçĕсем вĕçленнĕ, район 65 çул тултарнă тата Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕ ячĕпе Акатуй ирттересси çинчен майăн 21-мĕшĕнче 302 № йышăну кăларнă.

Акатуй кăçал июнĕн 12-мĕшĕнче Лантăш вăрманĕн уçланкинче иртет.

Йышăнупа килĕшӳллĕн уява хатĕрленсе ирттерме комисси йĕркеленĕ, ĕç планне тата уяв программине çирĕплетнĕ.

Уяв 10 сехет те 30 минутра пуçланать.

Çур аки – 2009

## Çĕр улми лартаççĕ

Районта кăçал çĕр улми çине пĕтĕмĕшле тимлĕрех пăхни сисĕнет. Ĕнерхи кун тĕлне пĕрлешӳллĕ тата хресчен (фермер) хуçалăхĕсем çак культурăна пĕтĕмпе 1033 гектар (86,4 процент) лартнă. Унччен çĕр улми лартма планламан хуçалăхсем те ку ĕçе кӳлĕнни «иккĕмĕш çăкăр» лаптăкĕ кăçал ытларах пуласси пирки калать. Май уйăхĕн 22-мĕшĕ тĕлне çĕр улми лартас ĕçе 3 пĕрлешӳллĕ хуçалăхпа 5 хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче вĕçленĕ.

Н.В. Никольские асăнса

## Паян та пирĕнпе пĕрле

– Кунта килмесен, пысăк событинчен юлнă пекех туятăп хама, – терĕ çамрăк хĕрарăм чăвашсен пĕрремĕш профессорĕ, этнографĕ, историкĕ, фольклорисчĕ, чĕлхеçи, аслă шкулсене йĕркелекенĕ, «Хыпар» хаçата никĕслекенĕ Н.В. Никольский çуралнăранпа майăн 19-мĕшĕнче 131 çул çитнине халаллантă уяв пынă чух.

Митинга Уйкас Янасал ял тăрăхĕн пуçлăхĕ В.И. Егоров уçрĕ.

Митингра ентешĕмĕр çинчен нумай ырă сăмах пулчĕ. «Хыпар» издательство çурчĕн директорĕ А.П. Леонтьев вара вăл çав тери ырă кăмăллă çын пулнине палăртрĕ.

Район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов калашле, вăл чăн-чăн чăваш интеллигенчĕ пулнă.

Муркашсем ентешĕмĕрĕн ырă ятне çӳлте тытса пыраççĕ, район аталанăвĕшĕн ырми-канми тăрăшаççĕ.

Николай Васильевичăн тăван хуçалăхĕ Ильич яч. хис. хуçалăх та районта тĕреклисенчен пĕри. Митингра унăн ертӳçи И.В. Николаев, шкул директорĕ И.П. Федотова, педколледж директорĕн çумĕ З.И. Максимова, Никольскин тăванĕсен ячĕпе В.Н. Ипатьева тата ыттисем тухса калаçрĕç. Шкул ачисем сăвă-юрă парнелерĕç. Паркри сцена çинче вара вырăнти «Талан» пултарулăх ушкăнĕпе студентсем концерт кăтартрĕç.

**Л.ПАВЛОВА.**

Саламлатпăр

Хисеплĕ та хаклă çыннăмăра, юратнă мăшăра, аттене, ăшă кăмăллă асаттене, хуньстарике – Юрпаш ялĕнче пурăнакан **Игорь Васильевич МИХЕЕВА** 75 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Яланах çирĕп сывлăхлă пул, вăрăм кун-çул, иксĕлми вăй-хал сунатпăр. Эсĕ пурри пирĕншĕн телей, пуянлăх, савăнăç.

**Салампа: ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕ, мăнукĕсем тата йышлă тăванĕсем.**



Пирĕн хаклăран та хаклă мăнаки – **Васса Даниловна СПИРИДОНОВА** Муркаш районĕнче Шарпаш ялĕнче пурăнать. Вăл çак кунсенче 80 çул тултарать. Эпир ăна ырлăх-сывлăх, канлĕ ватлăх тата нумай çул пурăнма сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, пиччĕшĕпе шăллĕ тата вĕсен ачисем, ытти хурăнташ-тăванĕсем.**

Катькас ял тăрăхĕнчи Карамалькасси ялĕнче пурăнакан ĕçчен те чунĕпе илемлĕ, кăмăлĕпе вашават юратнă аттене, ăшă кăмăллă асаттене, ырă кăмăллă кукаçие тата хисеплĕ тăванăмăра – **Николай Васильевич ИВАНОВА** çуралнă кун ячĕпе



чĕререн тухакан ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăхпа, уй-хир пек пуян кĕрекепе татах та нумай çул телейлĕ пурăнма сĕнетпĕр. Тавах сана эсĕ пурришĕн. Эсĕ пирĕн пурнăç илемĕ, пирĕн шанчăк тата малашлăх палли. Эсĕ пуррипе эпир çирĕп пурнăç çулĕ çине тухрăмăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, аппăшĕ, икĕ ывăлĕпе кинĕсем, икĕ хĕрĕпе кĕрĕвĕсем, 5 мăнукĕ тата йышлă тăванĕсемпе ял-йыш.**